Мышкина Альбина Федоровна
доцент, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ
Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ
Шупашкар хули, Чăваш Республики
Ядранская Инесса Владимировна
директор
Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ
Шупашкар хули, Чăваш Республики

ВĔРЕНЕКЕНСЕН ХАКЛĂХ ПАЛЛИСЕНЕ ЙĔРКЕЛЕС ĔÇРИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙ-ХĂВАЧĔ

Аннотаци: вĕрентӳ ĕçĕнче литература хайлавĕн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл ачасен илемлĕх туртăмне аталантарас, ăс парас тата кану самантне илемлетес ĕçре питĕ вырăнлă. Илемлĕ хайлав тишкерĕвĕ çамрăк ăрăва пурнăçри тĕрлĕ инкек-синкекрен сыхланма та (пурăнса ирттермесĕрех пурнăç опытне ӳстерме май пуррине шута илсе), вĕсене кăмăл-сипет хаклăхне ăнлантарса пама та пулăшать. Çак хаклăх паллисен йышĕнче вара Тăван çĕршыва юратма, халăх йăли-йĕркине, ваттисене хисеплеме, çут-çанталăкпа чĕр-чунсене хӳтĕлеме, юратупа туслăха упрама, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентесси малти вырăна тухать.

Тĕп сăмахсем: илемлĕ литература, шкулти вĕрентӳ, хаклăх палли, литература урокĕ.

Мышкина Альбина Федоровна
д-р филол. наук, ведущий научный сотрудник
БНУ «Чувашский государственный институт гуманитарных наук»
Министерства образования Чувашской Республики
г. Чебоксары, Чувашская Республика
Ядранская Инесса Владимировна
директор
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Министерства образования Чувашской Республики
г. Чебоксары, Чувашская Республика

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ВОСПИТАТЕЛЬНЫЙ ПОТЕНЦИАЛ ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЫ В ФОРМИРОВАНИИ ЦЕННОСТНЫХ ОРИЕНТИРОВ ОБУЧАЮЩИХСЯ

Аннотация: *в статье раскрывается значение литературного произведения в учебной работе. Авторы подчёркивают, что оно способствует развитию у детей художественного вкуса, воспитанию и организации досуга. Анализ художественного произведения помогает молодому поколению не только избежать различных жизненных невзгод (позволяя не прожить, а приумножить жизненный опыт), но и объясняет им нравственные ценности. Среди этих ценностей на первое место выходит воспитание любви к Родине, уважения к народным традициям и старшим, защита природы и животных, сохранение любви и дружбы, взаимного уважения.*

Ключевые слова: *художественная литература, школьное обучение, ценностные ориентиры, урок литературы.*

Этем культуринче литература хайлавĕн виçĕ пысăк функцийĕ пуррине палăртмалла: илемлĕх туйăмне аталантарасси (эстетическая), ăс парасси (воспитательная), йăпану шайĕнче тивĕçтересси (развлекательная). Шкулта, литература урокĕсенче, тишкерекен илемлĕ хайлавсемшĕн вара малти вырăна илемлĕх туйăмне тата хайлав çине тайăнса вĕренекенсен кăмăл-сипетне аталантарасси, пурнăçри тĕрлĕ йывăрлăхсене курма вĕрентесси пулса тăрать. Шăпах çакăн пирки вĕрентӳ ĕçĕн вăрттăнлăхне тишкерекен нумай ăсчахсем калаççĕ. Акă, сăмахран, пĕр тĕслĕх: «Школа способствует формированию квалифицированного читателя, способного понимать художественные произведения, сопереживать и давать собственную оценку происходящему в них, вырабатывает привычку к чтению. Что же касается нравственного воспитания, то оно происходит всегда, когда читается, обдумывается и обсуждается художественное произведение, когда подростки откликаются на события, поступки героев, задумываются, а как они поступили бы в такой ситуации» [1, с. 98]. Хамăр тĕпчевре эпир литературăн ăс парас функцине тарăнрах пăхса тухасшăн.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Тĕпчев курăмлăрах пултăр тесе шкул программине (10 – 11 класс шайĕнче [4; 5; 6; 7]) кĕнĕ хăш-пĕр хайлавсене вĕрентнĕ май хакăл паллисене туллин сӳт-се-явма паракан тĕслĕхсем çинче чарăнса тăрар (*1-мĕш таблица*). Кунта çак пурте пĕлекен чăнлăха асра тытса тăни питĕ пĕлтерĕшлĕ: «Литература, как один из способов познать окружающий тебя мир, появилась много веков назад. Но не стоит забывать, что это одновременно и способ к познанию глубин человеческой души» [3, с. 34].

1-мĕш таблица

вĕренӳ ӳсĕмĕ	хакăл паллисем	авторсемпе вĕсен хайлавĕсем
10 класс	Тăван çĕршыва юратма, ун пуласлăхĕшĕн пуçне хунă паттăрсене хисеплеме вĕрентесси	1. «Чемен паттăр» халап; 2. М. Данилов-Чалтунăн «Лизавета Егоровна» калавĕ; 3. В. Элпин «Пулас кинсем» романĕ
10 класс	халăх йăли-йĕркине хисеплеме, ваттисене, аслисене итлеме вĕрентесси	1. «Чемен паттăр» халап
10 класс	çутçанталăк илемне хаклама, упрама, курма вĕрентесси	1. К. Ивановăн «Нарспи» поэми; 2. М. Кипекĕн «Вăрман Улăпĕ» калавĕ; 3. М. Кипекĕн «Çамрăк сунарçăсем» калавĕ
10 класс	чĕр-чунсене хӳтĕлеме вĕрентесси	1. М. Кипекĕн «Вăрман Улăпĕ» калавĕ; 2. М. Кипекĕн «Çамрăк сунарçăсем» калавĕ
10 класс	юрату тасалăхне упрама вĕрентесси	1. К. Ивановăн «Нарспи» поэми
10 класс	чăваш чĕлхине упрама, тăван халăх пуласлăхĕ пирки щухăша ярасси	1. Çеçпĕл Мишшин «Чăваш ачине», «Хурçă шанчăк» сăввисем
10 класс	çемьери çынсен хушшинче пĕр-пĕрне хисеплени, пĕр-пĕрин кăмăлне шута илни кирлине вĕрентесси	1. Ф. Павловăн «Сутра» камичĕ
10 класс	туслăха, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентесси	1. Н. Ишентейĕн «Шăнкăрч урокĕ» калавĕ
10 класс	вăйлă çын нихăçан та аллине усманнине кăтартасси	1. М. Данилов-Чалтунăн «Лизавета Егоровна» калавĕ
10 класс	çăкăрăн пурнăçри пĕлтерĕшне ăнланма пулăшасси	1. Е. Лисинăн «Çăкăр чĕлли» калавĕ
10 класс	пулас профессие суйласа илме пулăшасси	1. Л. Агаковăн «Пурте дипломлă» калавĕ
10 класс	вĕренекенсене пурнăçри вырăнне тупма пулăшасси	1. Л. Агаковăн «Пурте дипломлă» калавĕ
10 класс	чăваш халăхĕшĕн, ун пуласлăхĕшĕн вăй хунă чаплă çыннисене (И.Я. Яковлев, К. Иванов, Тайăр Тимкки т.ыт.те) хисеплеме вĕрентесси	1. К. Петровăн «Тайăр» роман-хроники
10 класс	инкеке лекнĕ çынна яланах пулăшма вĕрентесси	1. А. Лазаревăн «Санăн çитмĕл çичĕ тус» калавĕ
11 класс	мул мар, тăванлăх чи пысăк пуянлăх пулнине вĕрентесси	1. М. Илпекĕн «Хура çăкăр» романĕ; 2. А. Емельяновăн «Хура кăрăç» повеçĕ;

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

		3. Н. Терентьевăн «Пушар лаши» трагикомедийĕ
11 класс	ваттисене хиселеме вĕрентесси	1. Н. Терентьевăн «Пушар лаши» трагикомедийĕ
11 класс	тăван чĕлхене, халăх йăли-йĕркине хиселеме вĕрентесси	1. Б. Чиндыковăн «HOTEL CHUVASHIA» калавĕ
11 класс	хĕр, этем чыслăхне упрама вĕрентесси	1. Н. Петровскаян «Шурă лили» повеçĕ
11 класс	хамăра çуратнă атте-аннене ăнланма вĕрентесси	1. Д. Гордеевăн «Куккуклă сехет» калавĕ
11 класс	тепĕр çын туйăмне хиселеме вĕрентесси	1. С. Павловăн «Юрату юрлаттарать» калавĕ
11 класс	çемьери çынсен хушшинче пĕр-пĕрне хиселени, пĕр-пĕрин кăмăлне шута илни кирлине вĕрентесси	1. Н. Угаринăн «Тĕпсĕр сăпкари ача сасси» драми
11 класс	халăхăн иртнĕ кунĕсемпе мăнаçланма вĕрентесси	1. М. Карягинăн «Кĕмĕл тумлă çар» сăвăлла трагедийĕ
11 класс	юрату, туслăх туйăмĕсене упрама вĕрентесси	1. О. Австрийскаян «Пĕрремĕш туйăм» калавĕ; 2. У. Эльменĕн «Хăрнă вĕрене» калавĕ
11 класс	чĕрĕ чунсене, çутçанталăка упрама вĕрентесси	1. Д. Гордеевăн «Шăннă куççуль» калавĕ

Çапла вара чи пĕлтерĕшлĕ хаклав паллисем хушшинче çаксем пулса тăраççĕ: 1) Тăван çĕршыва юратма, ун пуласлăхĕшĕн пуçне хунă паттăрсене хиселеме вĕрентесси; 2) халăх йăли-йĕркине хиселеме, ваттисене, аслисене итлеме вĕрентесси; 3) çутçанталăк илемне хаклама, чĕр-чунсене хŷтĕлеме вĕрентесси; 4) юратупа туслăха упрама, пĕр-пĕрне хиселеме вĕрентесси; 5) чăваш чĕлхине упрама, тăван халăх пуласлăхĕ пирки шухăша ярасси; 6) пулас профессие суйласа илме, вĕренекенсене пурнăçри вырăнне тупма пулăшасси; 7) инкеке лекнĕ çынна яланах пулăшма вĕрентесси. Кунта çакна та асра тытса тăмалла: «Роль литературы и чтения в формировании мировоззрения и образа жизни подрастающего поколения огромна. Именно поэтому мы должны создавать условия, способствующих формированию читательского интереса, духовно-нравственному развитию подрастающего поколения посредством их вовлечения в активную познавательную деятельность в области отечественной и переводной литературы. Задача педагога сформировать обучающихся осознанной потребности в чтении как источнике интеллектуального, творческого и нравственного развития; расширять читательский интерес обучающихся, привлечением их к чтению разных источников и литературы» [2, с. 29].

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çӳлерех каланине шута илсе вĕренекенсемпе кăмăл-сипет тасалăхĕ, çынлăх тата кăмăл çирĕплĕхĕ пирки калаçу хускатма пулăшакан хайлав сыпăкĕсене тарăнрах тишкерни вырăнлă. Акă, сăмахран, «Чемен паттăр» халапри икĕ тĕслĕх. Халап пуçламăшĕнчех вулатпăр: «Ĕлĕк-авал чăваш хушшинче пĕр Чемен ятлă паттăр пурăннă. Вăл чăвашсене хӳтĕлесе, чăваш халăхне тапăнакан ют халăхсене çĕнтерсе тăнă. Вăл пурăннă вăхăтра ытти халăхсем чăвашсене тапăнма та шикленнĕ. Аван пулнă чăваш халăхне Чемен паттăр пурăннă вăхăтра. Анчах этем ĕмĕр пурăнаймасть. Чемен те пурăннă-пурăннă та кайран ватăлса вилнĕ. Хăй вилес умĕн вăл чăвашсене пухса çапла каласа хăварнă: Эп вилсен, мана лаша çине утлантарса, мĕнпур вăрçă хатĕрĕсене çакса пытарăр, эпĕ кирлĕ пулсан, манăн тапра патне пырса: «Чемен, Чемен!” тесе чĕнĕр анчах – эпĕ тухăп, – тенĕ» [6, с. 8]. Ку сыпăка тишкернĕ чух Тăван çĕршывшăн пуçне хунă паттăрсем пысăк хисепе тивĕçли пирки сăмах пуçарни вырăнлă. Халăх сăмахлăхĕнчи паттăр сăнарне Аслă Аттелĕх вăрçинче Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе пуç хунă паттăрсемпе те, паянхи кун паттăрлăх кăтартакан салтаксемпе те танлаштарма пулать. Паттăрлăх текен хаклăх этем хăш ĕмĕрте пурăннипе мар, кашни уйрăм çыннăн чун тасалăхĕпе тата çирĕплĕхĕпе, вăл Тăван çĕршыва мĕн таран вăйлă юратнипе, ăна кирек хăш самантра та хӳтĕлеме хатĕр пулнипе çыхăнтарса кăтартмалла.

Халап вĕçĕнчи сыпăк халăх йăлинчен, унăн ирĕкĕнчен тухсан пысăк инкек пулма пултарнине сăнарлать. Çак сыпăк урлă аслисен, ваттисен вĕрентĕвне асра тытса, шута илсе тăмаллине вĕрентме пулать: «Çавăнтан кайран вăхăт нумай та иртмен – хай Чемене шăтăкран чĕнсе кăларнă çамрăксем чирлесе вилме пуçланă. Çамрăксем хăйсем те шухăшланă: «Чемен хăйне вырăнсăр хускатса чăрмантарнăшан çилленчĕ пулмалла», – тенĕ. Ваттисем те каланă: «Чемене кӳрентертĕмĕр», – тенĕ. Вара ял çыннисем, Чемен çиллине пусарас тесе, Чемене чӳк тунă. Çав çултан пуçласа ку ялти тата таврари чăвашсем Чемене кашни çулах чӳк тăва пуçланă» [6, с. 10].

К. Петровăн «Тайăр» роман-хроникине вĕреннĕ май чăваш халăхĕн чаплă çыннисем пирки калаçни, вĕсем халăх пуласлăхĕшĕн тунă ĕçсене палăртни

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

вырăнлă. Хайлаври сăнарсем чăн çынсемпе тӳр килнин тĕп сăлтавĕ чăвашсен кун-çулĕн уйрăм тапхăрне (XX ĕмĕр пуçламăшĕ) илемлĕх мелĕсемпе кăтартни пулнине ĕнентермелле: «Карталаннă хуркайăксем ял-ял çийĕн вĕçсе иртеççĕ. Тӳпене çав тери çӳле хăпарнă вĕсем. Сăпайлăн та кăмăллăн сас параççĕ, кăринклетеççĕ... Чăвашсем хушшинче çакăн пек сăмах çӳрет: «Çĕр çине вилĕмсĕр ĕç туса хăварнă çын чĕри, халăхшăн чунтанах тăрăшнă, çуннă хастар чĕре, хуркайăка çаврăнать». Епле йĕркеленсе вĕçеççĕ вĕсем. Малта – чи вăйли, çивĕч куçли, чи хăюлли. Вăл хăйăн хăватлă çуначĕсемпе çирĕп сывлăша çурса пырать, йĕр хывать. Ыттисем вăл кăтартнă çулпа малалла каяççĕ. Ваттисем каланă тăрăх, «кайри – мала, малти – кая» теме юрамасть хуркайăксене» [6, с. 322]. Кунта калаçу, паллах, И.Я. Яковлев, К. Иванов, Тайăр Тимкки, И. Юркин тата ыт. чăваш вĕренĕвне, литературине, ăслăлăхне аталантарнă çынсем пирки пырать.

М. Кипекĕн «Çамрăк сунарçăсем» калавĕ çутçанталăка упрама, чĕрĕ чунсене хӳтĕлеме вĕрентнĕ чухне питĕ кăтартуллă. Хайлав тăршшĕпех çыравçă сăнарсен калаçăвĕсене, шухăшĕсене усă курса сунар ĕçĕнчи сиенлĕ тата пархатар самантсем пирки калаçать. Акă, тĕслĕхе, çакăн пек пĕр сыпăк: «Анчах сунарçă, кайăксене пăшалпа персе тытать пулин те, вĕсене ĕрчеме те пулăшать. Çапла пултăр тесен, унăн чи малтан сунар пирки кăларнă саккунне, унта кăтартнă йĕркесемпе вăхăта яланах пăхăнса тăмалла. Çав саккуна пăхăнман çынсене сунарçăсем мар, браконьер теççĕ. Эпир ăна чĕр-чунсемпе çут тĕнче тăшманĕ тетпĕр. Акă хăвăрах шухăшласа пăхăр, çуркунне пусма ларнă кайăк кăвакалне тытакан браконьер пĕр кăвакала çеç мар, унăн кĕç-вĕç тухас вунпилĕк-çирĕм чĕппине те пĕтерет. Е тата хĕллехи сунар тапхăрĕ пĕтнĕ хыççăн мулкач амине тытни кĕркунне çав вырăнта улт-çич мулкач хутшăнассине пĕтерни пулать. Кĕрхи сивĕ кунсем киличчен тытнă тиллĕн тирĕ темиçе хут йӳнĕрех. Пирĕн чи малтанах çав браконьерсемпе кĕрешес пулать. Çапла тунипе эпир ырă кайăксене ĕрчеме пулăшăпăр» [6, с. 405].

М. Илпекĕн «Хура çăкăр» романĕпе А. Емельяновăн «Хура кăрăç» повеçĕ вĕренекенсене мул мар, тăванлăх чи пысăк пуянлăх текен хаклăха кăтартса парас тĕлĕшрен кăтартуллă. Çапла «Хура çăкăр» романра Шерккейпе Элентей

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пĕртăвансен çемйи пирки çакна вуласа пĕлетпĕр: «Çакă пулчĕ ĕнтĕ вĕсен ашшĕнчен юлнă пĕтĕм мулĕ. Кун пек пуласса Шерккей те, Элентей те кĕтменччĕ, анчах тинех мĕн тăвăн? Йывăрпа иртрĕ-çке ашшĕн кунçулĕ... Çамакка несĕлĕ пирки ялта тĕрлĕ сăмах çӳрет: хăшĕсем вĕсене ĕлĕк-авалтанах çапла чух пурăннă теççĕ, хăшĕ тата: «Вĕсем мул пур çинчех хытса пăнтăхнă», – тет. Çамаккан аслашшĕ-и, мăн аслашшĕ-и, хăй вăхăтĕнче таврари çулсен çĕрлехи тискер хуралçи пулнă пулать, вăл усал вăрă-хураха çывăх курнă имĕш, пуян сутăçсене чееленсе юранă, тет, çавăнтан вара хăй те пит пуйса кайнă пулать» [7, с. 26]. «Хура кăрăç» повеçри Крысловсен çемйи те пуяс шухăш айĕнче: «Коля Крысловсем пĕве хыçĕнче пурăнаççĕ. Вĕсен килĕпе вĕçленет те урам. Умĕнчи çырмара та, вĕсенчен аялараxри çырмара та карта тытса çавăрнă вăрман. Пысăках мар вăл, пĕр икĕ гектар енне пулать-и? Ялта ăна Крыслов Швейцарийĕ теççĕ. Семен Ильич та мар, ун ашшĕ, Коля аслашшĕ Илья Семенч лартнă ăна. Выльăхсем çĕмĕресрен карта тытса çавăрнă. Карти-шурĕ тăкак кăтартать ĕнтĕ, анчах Семен Ильич унпа хăй вăрманĕ пек усă курать: кунта çулла сутăн илнĕ тăватă-пилĕк пăру çӳрет, йывăçсене суйласа касма пултарать. Çĕнĕрен лартать» [7, с. 112]. Анчах шăпах çак туртăм – мул, пуянлăх шырани, хапсăнни – хайлавсенче Шерккейпе Семен Крыслов çемйине аркатать, ачисене телейсĕр тăвать.

Çапла вара ĕçе пĕтĕмлетнĕ май çакна палăртмалла: литература хайлавне вĕрентнĕ чухне вĕренекенсен кăмăл-сипетне, хаклăх туртăмне йĕркелеме пулăшакан нумай ыйтусене хускатма пулать. Ачасене ăс парас ĕçре илемлĕ литература нимпе те улăштарма çук ĕнентерӳллĕ кăтарту материалĕ пулса тăрать.

Список литературы

1. Влияние художественной литературы на воспитание современных школьников / Н. В. Беляева, Л. Р. Бердышева, Ж. Н. Критарова, В. М. Шамчикова // Педагогический журнал. – 2018. – Т. 8, № 1. – С. 95–105.

2. Макарова, Л. С. Использование метода критического мышления при формировании у обучающихся навыка осознанного чтения на уроках истории и обществознания в системе СПО / Л. С. Макарова // Роль литературы и чтения в

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

формировании мировоззрения и образа жизни подрастающего поколения : сборник статей и эссе по материалам Всероссийской научно-практической конференции (28 марта – 28 апреля 2023 года). – Сызрань : ГБПОУ «ГК г. Сызрани», 2023. – С. 29–32.

3. Мещерякова, Н. Н. И между ними тонкая лишь грань… Общность реального мира и сказочной фантастики / Н. Н. Мещерякова // Роль литературы и чтения в формировании мировоззрения и образа жизни подрастающего поколения : сборник статей и эссе по материалам Всероссийской научно-практической конференции (28 марта – 28 апреля 2023 года). – Сызрань : ГБПОУ «ГК г. Сызрани», 2023. – С. 34–37.

4. Мышкина, А. Ф. Тăван литература: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 10-мĕш класс валли / А. Ф. Мышкина. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2021. – 431 с.

5. Мышкина, А. Ф. Тăван литература: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 11-мĕш класс валли / А. Ф. Мышкина. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2022. – 432 с.

6. Ядрицова, А. А. Чăваш литератури: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 10-мĕш класс валли / А. А. Ядрицова, И. В. Ядранская, А. Ф. Мышкина. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2024. – 432 с.

7. Ядрицова, А. А. Чăваш литератури: вĕренӳпе вулав кĕнеки. 11-мĕш класс валли / А. А. Ядрицова, И. В. Ядранская, А. Ф. Мышкина. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2024. – 432 с.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)